26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
МАРТ
31
ЮНКУН
70(6307) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Çураки вăхăтĕнчи агитаци

Ыран республикăри колхозсенче çуракине мĕнле хатĕрленнине пăхса тухас ĕç пуçланать. Ятарласа тунă комиссисем кашни колхоз çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе мĕн-мĕн туни-не, мĕн тумасăр юлнине палăртаççĕ, ăмăртакан колхозсем пĕр-пĕрне пулăшас ĕçе организацилеççĕ. Çак смотрăн тĕп задачи — колхозсем çуракине мĕнле хатĕрленнине тĕплĕн тĕрĕслесе тухасси, вĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерме пулăшасси. Кашни бригада, кашни колхоз тата кашни район çуракине тухма çак кунсенче пĕтĕмĕшпех хатĕрленсе çитмелле, смотр çак задачăна пурнăçлама пулăшмалла.

Ака ĕçĕсем пуçланиччен шутлă кунсем юлчĕç. Çураки вăхăтĕнче массăллă агитаци пысăк вырăн йышăнмалла, çавăнпа та ăна тивĕçлипе организацилемелле. Пирĕн большевикла агитаци кашни колхозник патне, колхоз производствин кашни участокне çиттĕр, вăл вырăнти практикăллă ĕçсемпе çыхăнса пулса пытăр, вăл çураки вăхăтĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерме колхозниксемпе колхозницăсене мобилизацилетĕр, ака ĕçне кĕске вăхăтра, пысăк пахалăхпа туса ирттерме пулăштăр. Агитаци ĕçне çакăн пек йĕркелес тесен, агитаторсен çирĕп коллективне, боевой коллективне пухса, организацилени кирлĕ.

Ун пек агитколлективсем пирĕн сахал мар. Шăхасан районĕнчи Шуркассинчи пуçламĕш парторганизаци кашни коммунистах тата кашни агитаторах пĕр-пĕр бригада çумне çирĕплетнĕ. Агитаторсем нумаях пулмасть ялхуçалăхĕнче малта пыракансен канашлăвĕ илнĕ обязательствăсем çинчен колхозниксене ăнлантарса панă, çуракине хатĕрленес ĕçе вăйлатма чĕннĕ. Агитаторсем пулса кунта учительсем, колхоз председателĕсем, бригадирсем, комсомолецсем ĕçлеççĕ. Агитколлектив лайăх ĕçленĕ май, колхозсем те лайăх ĕçлеççĕ, районра малта пыраççĕ.

Анчах та чылай агитколлективсем çуракине хатĕрленес ĕç çине халĕ çителĕксĕр çаврăнса пăхаççĕ-ха. Вĕсем хăйсен агитациллĕ ĕçне организациллĕ ĕçпе кирлĕ пек çыхăнтарса пыраймаççĕ. Фронтри ăнăçусем çинчен, пĕтĕм çĕршыври пысăк çитĕнӳсем çинчен калаçнă чухне час-часах хăйсен районĕнчи е колхозĕнчи çитĕнӳсемпе çитменлĕхсем çинчен манса хăвараççĕ, çав çитменлĕхсене пĕтерме колхозниксене мобилизацилемеççĕ.

Çуракине мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслес тĕлĕшпе пыракан смотра агитаторсен те активлăн хутшăнас пулать, ку ĕçри çитменлĕхсене палăртма, вĕсене çийĕнчех пĕтерме пулăшас пулать. Анчах агитколлективсен хăйсен те çураки вăхăтĕнче ĕçлеме хатĕр пулас пулать ĕнтĕ.

Чи малтан, агитаци ĕçĕ çураки вăхăтĕнче пуринчен ытла хирте пулса ирттермеллине шута илес пулать. Çавăнпа та кашни участокрах агитатор пулмалла. Агитаторсем халĕ çитмеççĕ пулсан, парти пе комсомол организацисен вĕсене уйăрса лартса, агитаци ĕçне тума вĕрентсе хатĕрлемелле. Çакăн чухне агитатор хăй ĕçре пример кăтартма тивĕçлине асра тытмалла.

Çураки вăхăтĕнче агитацин пур формисене те ĕçе ярас пулать. Хаçат-журналсем вуласа парасси, калаçусемпе докладсем ирттересси, стена хаçачĕсем кăларасси, плакатсемпе лозунгсем çырса çакасси, витринăсем тăвасси, социализмлă ăмăрту мĕнле пынине кăтартакан хăмасем тăвасси, — çаксем тата агитацин ытти формисем те çураки вăхăтĕнче анлăн ĕçе кĕрсе пымалла.

Ялсенчи вулав çуртсемпе клубсем агитаци ĕçне активлăн туса пыракан центрсем пулмалла. Хăйсем агитаци туса пынисĕр пуçне, вĕсен агитаторсене, вулавçăсене тата докладчиксене материалсем тупса парса пулăшмалла, агитаци ĕçне туса пыма, агитаци валли темăсем суйласа илме агитаторсене вĕрентсе пулăшса тăмалла, агитаторсем пулса ĕçлеме çĕнĕрен те çĕнĕ юлташсене явăçтармалла.

Массăллă агитаци ĕçне лайăх туса пыни çуракине ăнăçлăн ирттерме чылай енчен пулăшмалла. Çавăнпа ВКП(б) райкомĕсен пропагандăпа агитаци отделĕсен тата пуçламĕш парторганизацисен çураки вăхăтĕнче агитаци ĕçне тивĕçлĕ вырăна лартассишĕн тăрăшас пулать. Халех агитаторсене уйăрса çирĕплетмелле, вĕсене ĕçе хăнăхтармалла, агитаци ĕçне мĕнле туса пымаллине палăртса хумалла.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 29-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Мартăн 29-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Мартăн 28-мĕшĕнче фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 100 автомашинине çити пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен складне сирпĕтнĕ, тăшманăн полевой тата зенитнăй артиллерин 5 батарейине пусарнă.

Хура тинĕсре пирĕн авиаци тăшманăн 4.000 тонна водоизмещениллĕ транспортне путарнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн войскăсем уйрăм участоксенче вырăнти çапăçусем туса пынă. Пĕр соединенин чаçĕсем, тăшман хирĕç тăнине сирсе пăрахса, унăн опорнăй пунктне йышăнса илнĕ. Тăшманăн 160 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Гвардин старши лейтенанчĕ Баландин, старшина Пустовалов тата сержант Неймулин ларса пыракан танк çапăçура нимĕçсен 3 танкне персе çĕмĕрнĕ тата гусеницисемпе тăшманăн миномет батарейине таптаса çĕмĕрнĕ. Гвардин кĕçĕн лейтенанчĕ Туленков ертсе пыракан танк экипажĕ нимĕçсен 5 дзотне, 4 орудине тата темиçе пулеметне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Белый хулинчен кăнтăртарахра тăшманăн вăйлă тĕреклетнĕ узелĕ патĕнче хаяр çапăçусем пулса иртнĕ. Ковадзе ертсе пыракан чаçăн боецĕсем нимĕçсене атакăланă та вĕсен оборонине шăтарса кĕрсе кайнă. Çав вăхăтра Жилин лейтенант хăйĕн отрядĕнчи боецсемпе пĕрле гитлеровецсен тылне кĕрсе кайнă та вĕсене сасартăк тапăннă. Кĕске çапăçу пулнă хыççăн нимĕç гарнизонĕн чылай пысăк пайне пĕтерсе тăкнă. Малтанхи позицисене каялла тытса илес шутпа нимĕçсем 2 хутчен контратака туса пăхнă, анчах пысăк çухатусем тӳссе каялла чакнă. Тăшмана халран ярсан пирĕн подразделенисем малалла куçнă та халăх пурăнакан тата 3 пункта йышăнса илнĕ.

* * *

Белгород районĕнче пĕр чаçăн автоматчикĕсем сасартăк тапăнса тăшманăн пехотин пĕр батальонне сапаласа янă. Нимĕçсен 100 çити салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн саперсем тăшманăн 3 пысăк дзотне вĕсен гарнизонĕсемпе пĕрлех сирпĕтсе янă

* * *

Çурçĕр Донецăн вăтам районĕнче тăшман шывăн сулахай енне каçма хăтланнă. Тĕрлĕ хĕçпăшалсенчен персе, совет боецĕсем нимĕçсене сапаласа янă. Тăшманăн 200 çити салтакĕпе офицерне, 4 минометне, 2 орудине тата темиçе автомашинине пĕтерсе тăкнă. Совет снайперĕсем ăнăçлăн кĕрешеççĕ. Красноармеец Колосов юлташ мартăн 5-мĕшĕпе 28-мĕшĕ хушшинче 40 гитлеровеца вĕлернĕ. Боец Гришин юлташ пĕр кун хушшинче 4 нимĕçе вĕлернĕ.

* * *

Смоленск облаçĕнчи партизансен отрячĕ çĕрле нимĕç гарнизонне тапăнса 45 нимĕç салтакĕпе офицерне вĕлерсе тăкнă, 2 пулемет тата 35 винтовка тытса илнĕ. Çав çĕрех партизансен тепĕр отрячĕ нимĕçсен фашистла захватчикĕсем чарăннă пĕр яла хупăрласа илнĕ. Партизансем темиçе вуншар гитлеровеца вĕлерсе тăкнă.

* * *

Аялараххра нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Ростов облаçĕнчи Паратовка районĕнче тунă тискер ĕçсем çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Паратовка районĕнчи нимĕç урипуснă кашни станицăрах вĕсен преступленийĕсен юнлă йĕрĕ юлнă. Бандитсем пуян колхозсене çаратса пĕтернĕ, колхозниксен харпăрлăхĕсене тустарнă. Каялла чакас умĕн, фашистла тискерсем пĕр çĕр хушшинчех Паратовка зерносовхозĕнче 143 çынна асаплантарса, персе пăрахнă. Персе пăрахнисем хушшинче тракторист Иван Свитенко, унăн арăмĕ тата икĕ ачи, чабан Семен Шадько, слесарь Николай Медьведев, унăн ывăлĕпе арăмĕ, учительница Вера Крепкова, трактористка Любовь Мановицкая тата ыттисем те пур. Гитлерла варварсем пирĕн районта тунă пур усал ĕçсене те пĕр актра каласа пама май килмест. Паратовка станцинче пурăнакан çынсем пĕр айăпсăр юхтарнă юнăн тавăрма, гитлерла бандитсен шайкине аркатса тăкас ĕçе хăйсен пĕтĕм вăйне пама пулса тупа туреç». Акт çине çаксем алă пуснă: Н. Слепченко, П. Гусаров, М. Халимов, С. Владыкин, А. Пристенская, М. Дунаев, Н. Шимонова, М. Погребняк, Т. Приходченко тата ыттисем те.

Мартăн 30-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Мартăн 30-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн войскăсем хăйсем илнĕ рубежсене çирĕплетнĕ тата разведка тунă. Пĕр чаçăн боецĕсем артиллери батарейине тата тăшман пехотин пĕр ротине çити пĕтерсе тăкнă. 6 пулемет, 18 автомат, темиçе вуншар винтовка тата боеприпассен складне тытса илнĕ. Нимĕçсен 17 бомбардировщикĕ виçĕ истребительпе пĕрле пырса пирĕн войскăсем çине бомбăсем пăрахма хăтланнă. Шумихин юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçри зенитчиксем пеме пуçласа, темиçе минута хушшинче тăшманăн 3 самолетне персе ӳкернĕ. Нимĕçсен ытти самолечĕсем вара тĕлли-паллисĕр темиçе бомба пăрахнă та вăскаса вĕçсе кайнă.

* * *

Белый хулинчен кăнтăртарахра пĕр соединенин чаçĕсем тăшман вăйлăн хирĕç тăнине сирсе ярса малалла куçса пынă тата халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Çав пунктсемшĕн пынă çапăçусенче 300 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Тăшмантан 2 оруди, миномет батарейине тата боеприпассен складне тытса илнĕ.

* * *

Çурçĕр Донецăн вăтам районĕнче нимĕç автоматчикĕсем пирĕн пĕр чаçăн позицийĕсене атакăлама хăтланнă. Пирĕн боецсем гитлеровецсене хăйсен малтанхи позицийĕсем патне хăваласа янă, вĕсене пысăк çухатусем кӳнĕ. Тепĕр участокра артиллерирен персе тăрса, тăшманăн пĕр çĕре пухăнса тăнă йышлă пехотине сапаласа янă, 2 миномет батарейине пусарнă тата тăшманăн хăй тĕллĕн çӳрекен орудине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кубань çинче тăшманăн пĕр роти, 7 танкпа бронемашина пулăшнипе, пирĕн оборонăна разведка тума хăтланнă. Пĕр чаçăн подразделенийĕ артиллерипе минометсенчен персе тăнипе тăшмана сирсе янă, нимĕçсен 4 танкне персе çĕмĕрнĕ. Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 9 самолетне персе ӳкернĕ. Зенитчиксем тăшманăн 2 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталино облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕç гарнизонне аркатса тăкнă. Гитлеровецсене 100 çын ытла вĕлернĕ, вĕсенчен 15-шĕ офицерсем. Ровно облаçĕнчи партизансен отрячĕ тăшманăн салтакĕсене турттарса какан поезда ӳпĕнтерсе янă. Паровоз тата 100 вагон çĕмĕрĕлнĕ. Крушени пулнипе 120 гитлеровец вилнĕ е аманнă.

* * *

Нимĕçсен 15-мĕш пехотнăй дивизийĕн 88-мĕш полкăн 8-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ унтер-офицер Германин Крайз çапла каласа панă: «Пирĕн дивизи Францирен февраль уйăхĕн çуррине килсе çитрĕ. Эпĕ ĕнтĕ Хĕвелтухăç фронтĕнче çапăçусенче пулса куртăм, икĕ хут амантăм. Францирен Российăна килнĕ салтаксен шухăш-кăмăлĕсем начар. Кунта тимĕр хĕрес вырăнне йывăç хĕрес тупма пит çăмăллине салтаксем лайăх пĕлсе тăраççĕ. Çав йывăр чăнлăха салтаксем тем тĕрлĕ те сӳтсе-яваççĕ. Иртнĕ çулта Хĕвеланăçĕнче иккĕмĕш фронт уçассине ĕненекенсем сахал пулнă. Халĕ ĕнтĕ нимĕçсен дивизийĕсене нумайĕшне Францирен Хĕвелтухăçнелле куçарнă пирки салтаксемпе офицерсенчен нумайĕшĕ çапла шутлаççĕ: англичансемпе американецсем çакăнпа усă кураççĕ пулĕ, теççĕ»

* * *

Невесино хули çывăхĕнче Югослави партизанĕсем тăшманăн 300 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă тата 118 итальянеца тыткăна илнĕ. Оккупантсенчен çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 10 миномет, 25 пулемет, боеприпассем тата тĕрлĕ çар хатĕрĕ нумай. Конниц хули патĕнче тата Неретва шывĕн районĕнче пулнă çапăçусенче патриотсем итальянецсемпе нимĕç оккупанчĕсене пысăк çухату тӳстернĕ

„Çĕнтерĕве çирĕпрех туптар!"

Республика шефа илнĕ чаçри боецсемпе командирсем тата политработниксем Чăваш республикинчи ĕççыннисем патне янă çыру

Хамăрăн соединенири боецсемпе командирсен тата политработниксен ячĕпе Сире хĕрӳллĕн боевой салам яратпăр. Эсир пирĕн пата Хĕрлĕ Çарăн чаплă юбилейĕ ячĕпе янă парнесемшĕн пирĕн воинсем Сире пĕтĕм чун-чĕререн тав тăваççĕ. Сирĕн парнесене эпир боецсемпе командирсене хаяр çапăçусем хушшинчи кĕске самантсенче патăмăр. Гитлерла мерзавецсене хирĕç эпир халĕ хаяррăн çапăçатпăр, хамăрăн совет çĕрне метр хыççăн метр çĕнтерсе илетпĕр. Орденлă Чăваш республикинчи ĕççыннисем янă парнесем ылханлă тăшмана хирĕç кĕрешме пирĕн боецсене татах та ытларах хавхалантарчĕç. Фронтăн хамăр йышăнса тăракан участокĕнче тăшмана аркатмаллах пырса çапас тесе, эпир мĕнпур вăя хурăпăр, мĕнпур йывăрлăхсене çĕнтерĕпĕр.

Сталин юлташăн Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа панă приказĕпе хавхаланса, совет воинĕсем çĕнтерӳ тăвассишĕн хăйсен юнĕпе пурнăçне те хĕрхенмеççĕ. Пирĕн пĕр чаçа В. ялне тытса илме боевой приказ пачĕç. Çав яла гитлеровецсем хирĕç тăмалли вăйлăн çирĕплетнĕ узел туса хунă. Тăшманăн чул çуртсен подвалĕсенче вут-çулăм йăвисем 20 ытла вырнаçса ларнă пулнă. Ял патне пымалли усă вырăнсене тăшман тăшах персе тăнă. Тăшманăн артиллерийĕпе миномечĕсем вăйлă вут-çулăм тăкнă, анчах пирĕн войскăсен çапăçури хастарлăхне нимĕн те хавшатма пултарайман. Боецсем тăшмана çав ялтан çапса кăларчĕç.

Çав чаçăн подразделенийĕсем малалла наступлени туса пырса, пĕр вăрмана йышăнса илнĕ. Шикленсе ӳкнĕ гитлеровецсем, çар пурлăхĕсемпе хĕçпăшалсене пăрахсах, каялла тарнă.

Пирĕн соединенин боецĕсемпе командирĕсем тата политработникĕсем Сире çапла шантараççĕ: ылханлă тăшмана хирĕç эпир малалла та хăюллăн та паттăррăн, хамăрăн пурнăçа хĕрхенсе тăмасăр кĕрешсе пырăпăр. Тăван çĕршыв, совет халăхĕ пиртен çĕнтерӳ кĕтет, тылри боецсем Хĕрлĕ Çар валли хăйсен вăйĕсене хĕрхенмесĕр хĕçпăшал туптаççĕ. Çакă ĕнтĕ пире тĕрĕслĕхлĕ кĕрешӳре хавхалантарать.

Хаклă юлташсем! Эсир, пирĕн шефсем, промышленноçпа ялхуçалăхĕнче пысăк çитĕнӳсем тунишĕн эпир савăнатпăр. Хĕрлĕ Çар фондне хăйсен тырпулĕнчен 120 пин пăт тырă панă, çавăн пекех тата танксен колоннисемпе боевой самолетсен эскадрильисене тума 60 миллион тенкĕ укçа пухнă Чăваш республикинчи ĕççыннисен патриотизмне Сталин юлташ хăйĕн икĕ телеграммипе тивĕçлипех тав туса хакларĕ.

Хĕрлĕ Çар пысăк çĕнтерӳсем турĕ, анчах тăшман вăйлă-ха, умра пире хаяр çапăçусем кĕтеççĕ. Эпир— фронтра, эсир вара—фабрикăсенче, колхозсенче, учрежденисенче пĕрле вăй хурса ĕçлесе çĕнтерĕве çирĕппĕнрех туптар! Йăвашчунлăх, лăпланса ларни пĕр самантлăха та пулмалла мар! Мĕнпур вăя фронта пулăшнă çĕре, тăшмана çапса аркатнă çĕре парар!

Совет фрончĕпе тылăн пĕрлĕхĕ сыва пултăр!

Сыва пултăр пирĕн çулпуç тата полководец Сталин юлташ!

Соединени командирĕ, соединенин командирĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ, политотдел начальникĕ.

МАЙ УЯВĔ УМĔНХИ СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТУ

Стахановла ĕçпе Хĕрлĕ Çара пулăшар

Хĕрлĕ Çарăн фронтри ăнăçăвĕсемпе хавхаланса юлашки вăхăтра «Большевик» заводăн коллективĕ производствăра паллă çитĕнӳсем турĕ. Социализмлă ăмăртăва хутшăнса хастарлăн ĕçленипе завод февраль уйăхĕнчи производство программине 110 процент тултарчĕ, ĕç тухăçлăхне 57 процент ӳстерчĕ, нумай чĕртавар перекетлерĕ.

Кунсăр пуçне февраль уйăхĕнче рационализаторла сĕнӳсем 14 панă. Лайăх производственниксем уйрăмăн вĕрентсе завод валли кадрсем хатĕрлеççĕ. Сăмахран, диффузорщик Шараськин Николай юлашки вăхăтра икĕ диффузорщик хатĕрлерĕ, халĕ пĕр çынна вĕрентет. Электромонтер Долгов Леонтий 9 çынна вĕрентнĕ, электромонтер Ширшов Иван — 14 çынна, слесарь Шарапов Иван — 2 çынна, водокачкăри старши моторист Бодров хĕрарăмсенчен 3 мотористка хатĕрленĕ, слесарь Моторин Степан — 5 çынна вĕрентнĕ.

Февраль уйăхĕнче заводра стахановецсен хисепĕ чылай ӳсрĕ. Халĕ пирĕн производствăра ĕçлекенсен пĕтĕм хисепĕнчен 45 процент ытла стахановецсем шутланаççĕ. Тимĕрçĕ-стахановец Закалябин Алексей хăйĕн нормине вăтамран илсен 209 процент тултарать. Токарь Баранов— 170 процент, медник Александров Иван — 169 процент.

Электромонтерсем Долгов Лаврентийпе Ширшов Иван, слесарьсем Сергеев Иванпа Корниенко Евгений тухăçлă ĕçлеççĕ. Вăтамран шутласан вĕсем пĕр норма çурă тата ытларах та тăваççĕ.

Халĕ пирĕн заводăн коллективĕ, 92-мĕш номерлĕ завод чĕнсе каланине сӳтсе-явнă хыççăн, май умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕ. Çак ыйтупа цехсенче митингсем тата пухусем пулса иртрĕç. Май умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, кашни рабочиех хăй çине татăклă обязательствăсем илчĕ. Завод коллективĕ пĕтĕмĕшпе хăй çине çапла обязательствăсем илнĕ: 1) мартпа апрель уйăхĕсенчи производство программине срокчен тултарса 5 процент планран ирттерсе продукци памалла, 2) ĕç тухăçлăхне 25 процента çити хăпартмалла, 3) продукцин хăйне ларакан хакне 5 процента çити чакармалла. Рационализаци сĕнĕвĕсене пурнăçласа 75 пин тенкĕлĕх экономи тумалла.

Кунсăр пуçне пирĕн коллектив çамрăк рабочисен квалификацине ӳстерме, заводăн подсобнăй хуçалăхне çуракине кăтартуллăн хатĕрлеме, МТС-а тракторсене юсас ĕçре пулăшма пулса хăй çине обязательствăсем илчĕ.

Стахановла ĕç меточĕсене анлăн сарасси — государствăллă паха та пысăк задача пулса тăрать. Пирĕн мĕн чухлĕ стахановецсем ытларах пулĕç, çавăн чухлĕ эпир çĕршыва продукци ытларах парăпăр, çавăн чухлĕ вара Германи фашисчĕсене çĕнтерес сехете çывхартăпăр.

С. Розенберг,
Çĕмĕрлери «Большевик» заводри парторганизаци секретарĕ.

Май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнчĕç

КАНАШ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Инвалидсен «Красный воин» артель коллективĕ (председателĕ М. Корчагин юлташ), Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, татăклă обязательствăсем илчĕ. Артельре ĕçлекенсем март уйăхĕнчи плана 140 процент, пĕрремĕш кварталти плана 130 процентран кая мар тултарма, Май уявĕ тĕлне иккĕмĕш кварталти плана 60 процент пурнăçлама обязательство илчĕç. Вĕсем халь çав обязательствăсене пурнăçлассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

Мартăн 25-мĕшĕ тĕлне «Красный воин» артель март уйăхĕнчи плана 120 процент, пĕрремĕш кварталти плана 140 процент тултарчĕ. Трикотаж цехĕнчи (заведующийĕ Скрипченко) Ф. Илларинова, М. Захарова, А. Романова, З. Ильина юлташсем март уйăхĕнче кулленех нормăна 160—220 процент тултарса ĕçлерĕç. Трикотаж цехĕ хăйĕн 1-мĕш кварталти планне мартăн 20-мĕшĕ тĕлне 168 процент тултарчĕ. Çавăн пекех çĕвĕ çĕлекен цех (заведующийĕ Петухов) коллективĕ те 1-мĕш кварталти плана 126,8 процент пурнăçларĕ. Ку цехри А. Чернова, О. Петухова, И. Фомин тата ытти юлташсем тăтăшах нормăна 305—350 процент тултарса ĕçлеççĕ. А. Васильева, А. Матвеева, А. Варламова юлташсем те нормăна кулленех 220—280 процент таран тултарса пыраççĕ. Çавăн пекех атă-пушмак çĕлекен цехри (заведующийĕ Устюгов) рабочисем те Май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăннă хыççăн тата тухăçларах ĕçлеме тытăнчĕç. К. Лезин, Е. Яндутов юлташсем иртнĕ вăхăтсенче нормăна 100—110 процент таран тултарса пынă пулсан, халĕ вĕсем кулленех хăйсен нормисене 135—150 процент тултарса пыраççĕ

Чугунçул çинче ĕçлекенсем çуркуннехи шывшурпа кĕрешме хатĕрленеççĕ

КАНАШ. Хулари железнодорожниксем çуркуннехи шывшурпа кĕрешме çине тăрсах хатĕрленеççĕ. Дистанцири путеецсем халĕ шывшур вăхăтне кĕтсе илме тĕплĕн хатĕрленсе çитнĕ. Авари запасĕ валли 5.800 чăпта, 3.000 кубометр чул, 60 кубометр йывăç хатĕрленĕ. Мастерскойра тимĕр кĕреçесем тата ломсем кирлĕ таранах туса хатĕрленĕ. Халĕ чугунçул линийĕсем хĕрринче кюветсене, шыв юхмалли канавсене тата кĕпер айĕсемпе трубасене юртан тасатаççĕ.

Путеецсем, Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, мартăн 20-мĕшĕ тĕлне кĕпер айĕсемпе трубасене юртан тасатса çитерме обязательство илнĕччĕ. Мартăн 18-мĕшĕнче вĕсем çак обязательствăна ăнăçлăн пурнăçларĕç.

Г. Михайлов.

Подсобнăй хуçалăхсенче апат-çимĕç ытларах туса илессишĕн

Промышленность предприятийĕсемпе суту-илӳ организацисенче рабочисемпе служащисене пĕрле апатлантарас ĕçе лайăхлатмашкăн тĕрлĕ çимĕçсем ытларах туса илес тесе, Чăваш республикинчи промышленность предприятийĕсемпе суту-илӳ организацисен подсобнăй хуçалăхĕсемпе ОРС-ĕсем Мари республикинчи подсобнăй хуçалăхсемпе тата ОРС-семпе ăмăртăва тухнă.

Чăваш республикинчи подсобнăй хуçалăхсемпе ОРС-сем хăйсем çине çакăн пек обязательствăсем илнĕ: подсобнăй хуçалăхсем валли çак кунсенчех çĕр, вăрлăх, ялхуçалăх машинисемпе инвентарьсем хатĕрлесе хумалла; 1943 çулта çĕрулмине гектартан 120 центнертан кая мар, купăстана 160 центнертан, кишĕре 120 центнертан, апата каякан чĕкĕнтĕре 140 центнертан, сухана 90 центнертан кая мар туса илмелле; 1943 çулта кашни подсобнăй хуçалăхра çĕрçырли, хăмлаçырли, хурăнçырли, крыжовник т. ыт. те лартса ӳстерме тытăнмалла; выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пĕтĕмĕшпех пурнăçламалла, кашни ĕнерен çулталăкне 1.200 литртан кая мар сĕт суса илмелле; рабочисемпе служащисене коллективлă тата уйрăм пахчасем туса унта пахча-çимĕç лартса ӳстерме пулăшмалла т. ыт. те.

Тав тăватăп

Эпĕ отечественнăй аслă вăрçă фронтĕнче хаяр тăшмана хирĕç пыракан çапăçуран аманса таврăнтăм. Тискер тăшман мана ĕмĕрлĕхе ĕçе юрăхсăр турĕ. Анчах та совет правительстви пире манмасть. Мана халĕ, яланах укçан парса пулăшнисĕр пуçне, сулла тăхăнмалли тумтирсем парса пулăшрĕç. Совет саманинче пурăнма тӳрĕ килнĕшĕн хама эп телейлĕ тесе шутлатăп. Партипе правительствăна пире манăçа хăварманшăн чĕререн тав тăватăп.

В. Максимов,
Отечественнăй вăрçă инвалиčĕ.

ÇУРАКИНЕ БОЛЬШЕВИКЛА ХАТĔРЛЕНСЕ КĔТСЕ ИЛЕР

Ăмăртса ĕçлекен колхозсенче

ÇЕМĔРЛЕ. Хутарти Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем кăçал вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе Турханти «Комбинат» колхозпа ăмăртăва тухнă. Вĕсем хăйсем çине конкретнăй обязательствăсем илнĕ. Çав обязательствăсене пурнăçласси СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн «Государствăн 1943 çулта ялхуçалăхне аталантармалли планĕ çинчен» йышăннă постановленийĕпе паллашнă хыççăн нумай вăйланчĕ.

— Постановлени тырпул тухăçлăхне ÿстермелли программа пулса тăрать, эпир кăçал нихăçанхинчен те нумайрах тырпул туса илмелле. Çакăншăн пирĕн ырми-канми ĕçлемелле,—терĕç Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем.

Колхоз çуракине тухма тĕплĕн хатĕрленсе çитрĕ. Акана тухма 84 сÿре, 46 плуг юсаса хунă. Вăрлăхсене сортланă, пахалăхне тĕрĕслесе пăхнă. Вĕсен пахалăхĕ лайăх. Хĕллехи агротехникăллă мероприятисене колхозниксем лайăх пурнăçларĕç. Уя 4.500 лав тислĕк кăларнă, 150 центнер кĕл, 50 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрленĕ. Çимелли çĕрулмисен тăррисене вăрлăхлăх 95 килограмм касса хăварнă.

Х. Лисин.

Кок-сагыз плантацине сарма йышăнчĕç

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Нумаях пулмасть кунта районри колхозсенче кок-сагыз енĕпе ĕçлекен звеносен звеньевойĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура колхоз председателĕсем те пулчĕç.

Башкир республикин Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз членĕсем мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене кок-сагыз культурине ытларах акса нумайрах туса илме чĕнсе каланине сÿтсе-явса, канашлу кăçал кок-сагыз плантацийĕсене нумай сарма йышăнчĕ. 1941 çулта çак питех те паха культурăна Комсомольски районра мĕнпурĕ те икĕ колхоз çеç акса тунă. 1942 çулта кок-сагыза чылай колхозсем акрĕç. Кок-сагыз плантацийĕ халĕ çĕршер гектара çитет.

«Красный Октябрь» колхоз иртнĕ çул гектартан 106 килограмм кок-сагыз тымарĕ пухса илнĕ. Анчах хăшпĕр колхозсем кок-сагыза пăхса ÿстермелли майсене шута илсе ĕçлеменнине пула ăна нумай туса илеймерĕç.

Канашлăва пухăннă звеньевойсем кăçал иртнĕ çулхи йăнăшсене тумалла маррине уйрăмах палăртрĕç. Кок-сагыза лайăх пăхса çитĕнтерессишĕн татăклă обязательствăсем илсе, социализмлă ăмăртăва тухрĕç. Кок-сагыза кăçал вĕсем юр ирĕлсе пĕтсенех малтанхи 2—3 кунта акса хăварма йышăнчĕç. Ĕçе хăвăрт тума вĕсем сеялкăсене малтанах кок-сагыз акма майлаштарса хураççĕ.

Кăçал районри колхозсем кок-сагыза государство хушнă чухлех акса хăварма пулчĕç, тата ăна тимлĕн пăхса ÿстерсе тымарне кашни гектартан 12 центнер, вăрлăхне 6 килограмм туса илме обязательство илчĕç.

В. Андреев.

Шкул ачисем колхоз ĕçне хутшăнаççĕ

КАЛИНИНО. Анат Карачурари «Социализм çулĕпе» колхозри пионерсемпе шкул ачисем иртнĕ çулта хăйсен вăйĕсене шеллемесĕр ĕçлерĕç, колхоза пысăк пулăшу пачĕç. Иртнĕ çулта колхоз производствинче ĕçлесе Галина Макарова 200 ĕçкунĕ, Анфиса Михайлова 180 ĕçкунĕ, Петя Михайлов 100 ĕçкунĕ, Тимоша Михайлов 80 ĕçкунĕ тунă, вĕсем хăйсен минимумне ытлашшипех пурнăçланă.

Сталин юлташăн приказĕ хыççăн колхозниксене кăна мар, пионерсемпе шкул ачисене те ĕçре пысăк усĕмсем тума хавхалантарчĕ. Вĕсем уроксем хыççăн ĕçлесе «Социализм çулĕпе» колхоза çуракине хатĕрленес ĕçре сахал мар пулăшрĕç. Михайлова Степанова пионерсем колхоза 25 центнер кĕл, С. Кириллова В. Михайлов пионерсем 18 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса пачĕç. В. Макарова В. Белов — 4 тихана кÿлсе çÿреме вĕрентрĕç.

Нумаях пулмасть, вĕсем хăйсен шкулĕнче пухура иртнĕ пухăва кайса колхоз производствинче 200 ĕçкунĕнчен кая мар ĕçлесе илме сăмах пачĕç.

Б. Шорников.

ÇАМРĂК ПАТРИОТСЕМ

ПЕПРЕÇ. Левка Муравьев Кĕлĕмкасси вăтам шкулĕнче, 2-мĕш класра вĕренет. Вăл яланах отлично вĕренет. Левка геройла Хĕрлĕ Çара пулăшас ĕçре ытти вĕренекенсемпе ăмăртать. Вăл «Комсомолец Чувашии» ятлă самолетсен боевой эскадрильине тума 200 тенкĕ укçа хыврĕ.

Вăтам шкулти ытти вĕренекенсем те самолетсен «Комсомолец Чувашии» эскадрильине тума укçа пухас ĕçе активлăн хутшăнчĕç. Вĕсем 3.000 тенке яхăн пухса пачĕç. А. Сергеевпа М. Архипова вĕренекенсем 100-шер тенкĕ, В. Петров, Н. Константинов, Кандиков т. ыт. те 65—50-шар тенкĕ хыврĕç.

В. Анис.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Обком пленумĕн решенийĕсене пурнăçлассишĕн

СОВЕТСКОЕ. Районри парторганизацисен çак кунсенче пулса иртнĕ пухăвĕ ВКП(б) Чăваш Обкомĕн 14-мĕш пленумĕн решенийĕсене сÿтсе-явнă. Çав пухура ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Никитин юлташ доклад туса пачĕ.

Докладчик парти ретне ÿстерес ĕç райпарторганизацире мĕнле пулса пынине çине чарăнса тăчĕ. Калас пулать, иртнĕ çулта парти ретне илес ĕç çителĕксĕр пулса пынă, пурĕ те 26 çынна çеç парти ретне илнĕ. Вăл çулта парти членне 18 çынна, парти членĕн кандидатне пурĕ те 8 çынна çеç илнĕ. Парти пуçламĕш организацийĕсем парти ретне хĕрарăмсене суйласа илес ĕç çине çителĕксĕр пăхнă, çулталăк хушшинче те 8 хĕрарăма çеç илнĕ.

Малта пыракан çынсене парти ретне илес ĕçĕн 1943 çулта чылай лайăххăнни палăрать. Виçĕ уйăх хушшинче парти ретне 16 çынна илнĕ. Тури Ачакри пуçламĕш организаци кăçалхи виçĕ уйăх хушшинче колхоз производствинче малта пыракан 3 çынна парти ретне илнĕ. Анчах ку вăл ĕçĕн пуçламăшĕ кăна-ха. Иртнĕ çул начар ĕçленĕ парторганизацисем халĕ те парти ретне илес ĕçре начар ĕçлеççĕ. Хăшпĕр парторганизацисем парти ретне илме ыйтса панă заявленисене вăхăтра пăхса тухмаççĕ. Çакă вăл Мăн Чурашри парторганизацийĕн ĕçĕнче палăрать. ВЛКСМ райкомĕ те парти ретне кĕме рекомендацисем пама ыйтнă заявленисене нумай вăхăт ответсăр тытать. Парти членĕн кандидачĕсемпе ĕçлесси те кирлĕ пек тухса пымасть. Кандидатра тăракан çынсенчен 33 процентĕн кандидатра тăмалли срокĕсем тухнă.

Пуху çуракине хатĕрленес енĕпе районри парторганизаци мĕнле ĕçленине тишкересе тухрĕ. Çак ĕçри çитменлĕхсене халех пĕтермелли мерăсене кăтартса пачĕ. Районри 11 колхозăн акмалли вăрлăхсем çитмеççĕ. 4 колхозра техникăллă культурăсен, 7 колхозра çĕрулми вăрлăхĕсем çук.

Я. Сигай.

Парти ÿсĕмĕ

ТАВАЙ. (Хамăр корр.). Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче Ленин — Сталин партийĕ хăйĕн ретне çĕршыври чи лайăх çынсен шучĕпе ÿстерсе пычĕ. Фронтра та, тылра та хĕрÿ ĕçре тĕрĕсленнĕ чи лайăх çынсем партие кĕреççĕ.

Районри парторганизаци кăçалхи икĕ уйăх çурă хушшинче 19 çынна парти членĕн кандидатне, 4 çынна парти членне илнĕ.

Парти ретне илес тĕлĕшпе уйрăмах МТС-ри пуçламĕш парторганизаци (секретарĕ Иванова юлташ) лайăх ĕçлет. Вăл кăçал парти членĕн кандидачĕсене 5 çынна илнĕ. Вĕсен шутĕнче — И. Макаров, П. Харитонов, В. Чичканов трактористсем, И. Кириллов комбайнер. Вĕсем МТС-ри чи паллă стахановецсем шутланаççĕ.

«Мартăн 8-мĕшĕ» колхозри паллă стахановка С. Фомина юлташа ВКП(б) членне илнĕ. Вăл ĕçре яланах малта пырать, хăйĕн политикăллă пĕлĕвне ÿстерес тĕлĕшпе лайăх ĕçлет. Фомина юлташ пĕлтĕр 250 ĕçкунĕ ытла тунă. Ку колхозри чи лайăх колхознике А. Кириллов юлташа парти членĕн кандидатне илнĕ.

«Комсомолец» колхоз председателĕн заместителĕ Н. Гладков ВКП(б) членĕн кандидатне кĕчĕ. Колхоз çитес çулхи тухăçлă тырпулшăн вăйлăн кĕрешет.

Пуçламĕш парторганизацисемпе кандидатсен групписем комсомол организацийĕсене ĕçре пулăшассине вăйлатрĕç. Комсомол организацисен ролĕ ÿсрĕ. Малта пыракан комсомолецсем парти ретне кĕме хатĕрленме тытăнчĕç. Халĕ 9 комсомолец ВКП(б) членĕн кандидатне кĕме хатĕрленеççĕ.

Районри парторганизацинчи пысăк çитменлĕх вăл— хăшпĕр парторганизацисенче парти ретне илнĕ çĕнĕ юлташсем хушшинче, уйрăмах ВКП(б) членĕн кандидачĕсем хушшинче кирлĕ пек ĕçлесе пыманни пулса тăрать.

В. Веселов.

Воскресник мĕнле иртнĕ

Мартăн 28-мĕшĕнче хулари пур учрежденисене, пурăнмалли çуртсене тасатмалли воскресник пулса иртрĕ. Воскреснике нумай организацисем активлăн хутшăнчĕç. Воскресник итогĕсене тĕрĕсленĕ хыççăн çакă курăнчĕ: Шупашкарти сăра завочĕ (директорĕ Быков юлташ) тата вĕсен рабочийĕсем пурăнакан общежити (коменданчĕ Морозов юлташ) çуртйĕр таврашĕсенчи тасамарлăхсене лайăх тасатнă. Çавăн пекех пĕр заводăн 3-мĕш номерлĕ çуртĕ те воскресникре паха тĕслĕхсем кăтартнă.

Анчах воскреснике пур организацисем те тивĕçлипе хутшăнман. Сăмахран, 2-мĕш, 10-мĕш номерлĕ пекарньăсем, Кинотеатр (директорĕ Соловьев), Чăвашпотребсоюз (Терентьев) учреждени çуртĕ таврашĕнчи тасамарлăхсене тасатма тытăнман. Çавăн пекех Гужосдорăн çуртĕ, общежитийĕ тата столовăйĕ воскреснике хутшăнман. Столовăй заведующине Козловăна 100 тенкĕ штраф тÿлеттермелле тунă. Военторгăн 2-мĕш номерлĕ столовăй заведующине Сабуровăна та штраф тÿлеттернĕ.

Вулав çурчĕсемпе клубсен ĕçне вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек йĕркелесе ямалла

Совет халăхĕ хăйĕн юратнă çĕршывĕн чыслăхĕпе ирĕклĕхĕшĕн нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç çирĕм пĕр уйăх вăрçать ĕнтĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче колхозлă ялăн политикăллă ыйтăвĕсем нихăçанхинчен те ытларах ÿссе кайрĕç. Колхозниксем тата МТС-семпе совхозсен рабочийĕсем хальхи вăхăтра отечественнăй вăрçă фрончĕсенчи тата пĕтĕм тĕнчери ĕçсем çинчен çырнă хаçатсемпе кĕнекесене питĕ тăрăшса вулаççĕ, çав ĕçсем çинчен калакан агитаторсемпе докладчиксене тата радиона питĕ тимлĕн итлеççĕ.

Ялти организацисемпе работниксен паха задачи вăл — халăха халь пулса иртекен ĕçсем çинчен пĕлтерсе тăрасси, политикăллă ăнлантару ĕçне тăтăшах туса пырасси, массăсене фронта активлăн пулăшма мобилизацилесси пулса тăрать. Çак ĕçре вулав çурчĕсем, колхоз клубĕсем, библиотекăсем, социализмлă культура çурчĕсем пысăк вырăн йышăнса тăмалла.

Пирĕн республикăра политпросвет учрежденийĕсем халăх хушшинче пысăк ĕç туса тăраççĕ. Вăрнар районĕнчи Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхозăн вулав çурчĕ (избач Карева юлташ) колхозниксем хушшинче политикăллă ăнлантару ĕçне куллен туса пырать. Унта хаçатсенчен касса илнĕ статьясен витринисем тунă. Унта хаçат-журналсем, художествăллă произведенисем вулаççĕ. Докладсемпе лекцисем пулаççĕ. Справка сĕтелĕ организациленĕ. Избач тата вулав çурчĕн активĕ хăйсен ĕçĕнче фронтовиксен çырăвĕсемпе анлăн усă кураççĕ. Сталин юлташăн выступленийĕсене, доклачĕсене, приказĕсене вĕренес ĕçе десятидворкăсенче анлăн сарса янă. Вулав çурчĕн массăллă-политикăллă ĕçне производствăра пысăк çитĕнÿсем тăвассипе çыхăнтарса пыраççĕ.

Куславкка районĕнчи Çăкалăхри вулав çурчĕ те (избач Эпштейн юлташ) ялти массăллă-политикăллă ĕçĕн чăн-чăн боевой центрĕ пулса тăнă. Сĕнтĕр районĕнчи Шупуçри вулав çурчĕ (избач Овчинников юлташ), Елчĕк районĕнчи Патреккелĕнчи вулав çурчĕ (избач Клементьев юлташ), Шупашкар районĕнчи Иккасинчи вулав çурчĕ (избач Андреева юлташ) тата республикăри ытти вулав çурчĕсем те нумайĕшĕ пысăк ĕç тăваççĕ. Элĕкрипе Елчĕкри социализмлă культура çурчĕсем ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Сĕнтĕрвăрринчи библиотека куçса çÿрекен 30 библиотека ытла организациленĕ. Улатăрпипе Пăрачкаври район библиотекисем те халăх хушшинче нумай ĕçлеççĕ. Унта тăтăшах учительсен конференцийĕсем пулаççĕ. Фашизма хирĕç çыракан писательсен произведенийĕсене тата фашистсен тискер ĕçĕсем çинчен калакан кĕнекесене, Хĕрлĕ Çар воинĕсен паттăрлăхĕ çинчен çырнă статьясене сасăпа вулаççĕ тата ытти те.

Анчах вулав çурчĕсем, колхоз клубĕсем, библиотекăсем, социализмлă культура çурчĕсем хăйсен хисеплĕ те ответлă ĕçĕсене пурте мар çавăн пек лайăх туса пыраççĕ. Вулав çурчĕсем нумайĕшĕ халăх хушшинче политикăллă çутĕçне начар йĕркеленĕ. Хăшпĕр вулав çурчĕсем тата пĕртте ĕçлемеççĕ. Çак тĕлĕшпе ĕç Кувакино, Шăхасан, Ишлей районĕсенче уйрăмах начар тăрать.

Шăхасан районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхозра вулав çурчĕ ялсовечĕпе пĕр çуртра вырнаçнă. Çурчĕ питĕ лайăх, вулав çурчĕн пысăк библиотека пур. Анчах та вулав çурчĕн пÿлĕмне хутмаççĕ, чÿречисене ватса пĕтерне, лозунгсем киввисем çеç çакăнса тăраççĕ, кĕнекесем урăх илмеççĕ. Шăхасан районĕнчи хăшпĕр ялсовечĕсем 1942 çулта кĕнекесем илме пĕр пус та паман. Районра 1942 çулта кĕнекесем илме 12.400 тенкĕ уйăрса хунă пулнă, анчах вĕсенчен 4.581 тенкĕ çеç расходланă.

Хăшпĕр районсенче вулав çурчĕсем ĕçлеменнине ĕçлекенсем çуккипе ăнлантарма пăхаççĕ. Анчах çав вăхăтрах учительсемпе усă курмаççĕ, вĕсене совместительство йĕркипе вулав çурчĕсен заведующийĕсем туса хумаççĕ.

Çутĕç пайĕсен, советсен, ВКП(б) райкомĕсен пропагандăпа агитаци отделĕсен боевой задачи — вулав çурчĕсене пурне те часрах йĕркелесе ярасси пулса тăрать. Политпросвет учрежденийĕсене халех работниксем тупса лартмалла, çав ĕçе чи пуçаруллă, чи пултаруллă çынсене лартмалла, пуринчен ытла унта вăтам, туллимар вăтам тата кĕçĕн шкулсенчи учительсене совместительство йĕркипе лартмалла.

Вулав çурчĕсене массăллă политпросвет ĕçĕн центрĕсем туса хумалла. Мĕнпур ĕçĕн никĕсне Сталин юлташăн доклачĕсемпе приказĕсене хумалла. Хатĕрленсе çитнĕ агитаторсемпе пропагандистсен вăйĕпе унта калаçусем, лекцисем, докладсем ирттермелле, хаçатсем вуламалла, Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене вуласа ăнлантарса памалла. Хĕрлĕ Çарăн паттăр ĕçĕсем çинчен каласа памалла, ĕççыннисене тылра паттăр ĕçсем тума хавхалантармалла, колхозниксене хуçалăхпа политика задачисене пурнăçлама мобилизацилемелле.

Кашни вулав çуртĕнче фотовыставкăсем, хаçатсенчен касса илнĕ статьясен витринисем, библиотекăсем пулмалла. Кашни вулав çуртĕнче художествăллă тата ытти тĕрлĕ литературăна сасăпа вулакансен (чтецсен) ушкăнĕ пулмалла. Художествăллă пултарулăха ÿстерсе ямалла, драма кружокĕсем, хор кружокĕсем тумалла.

Вулав çурчĕсен çар ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе тата массăсене физкультура тĕлĕшпе вĕрентсе хатĕрлес ĕçре вăйлăн пулăшмалла.

Вулав çурчĕсен ĕçри чи лайăх майсене, агротехникăна вĕрентмелле, стахановла шкулсем уçмалла.

Çакăнпа пĕрлех вулав çурчĕсен тата çуракине лайăхрах хатĕрленес ĕçе йĕркелемелле. Кашни вулав çуртĕнчех, кашни колхоз клубĕнчех социализмлă ăмăрту хăми пулмалла.

Политпросвет учрежденийĕсен политикăллă тĕллевĕ — фронтпа çĕршыва ытларах та ытларах тырă, какай, промышленность валли чĕрĕ чĕрлĕ вар парса тăрас ĕçе йĕркелесе сарса пырасси пулса тăрать.

М. Андреев,
ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци енĕпе ĕçлекен секретарĕ.

Ют çĕршывсенче

АНГЛИ, АМЕРИКА ТАТА ФРАНЦИ ВОЙСКИСЕМ МАЛАЛЛА КУÇНИ

ЛОНДОН, мартăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен войскисем Тунис фрончĕн пур участокĕсенче те малалла тапăнса пыраççĕ. Англин саккăрмĕш армийĕн чаçĕсем Хамамму ятлă пункта йышăнса илнĕ хыççăн халĕ ĕнтĕ Роммель базин шутланакан тĕп портран, Габесран 16 мильăра анчах тăраççĕ. Гафса — Макнаси районĕнче кĕрешекен Америка войскисем тата Англин саккăрмĕш арминчен хĕвеланăçнерехре куçса пыракан Франци чаçĕсем Кайруан патнелле сывăхарса пыраççĕ. Америка войскисен колонни Карлеуантан 20 мильăра ларакан Фондука тытса илнĕ хыççăн çыран хĕррипчи улăх патне çитсе тинĕс хĕррипелле тухма пуçланă. Çурçĕр Тунисра англичансен пĕрремĕш армийĕ наступлени пуçласа янă та Джебель-Абиода чугунçул узелĕ районĕнче ăнăçлăн малалла куçса пырать.

Союзниксен войскисем фронтăн пур участокĕсенче те малалла кайса пырса çĕр çинче те, сывлăшра та пÿ; пулса тăраççĕ.

Лондонри хаçатсенче вăрçă çинчен çырса тăракансем нимĕç войскисене халĕ Габес районĕнчен каялла чакса тухма çыран хĕррипчи ансăр коридор анчах юлнине палăртаççĕ. Габес çине тăвата енчен наступлени туса пыраççĕ: Эль-Геттартан, Макнасирен, Хаид хушăкĕ енчен пыракан çул патĕнчен тата, юлашкинчен, Фондук çулĕ çинчен. Нимĕçсем халĕ юлнă ансăр коридорпа усă курса каялла чакмасан, вĕсен каялла чакмалли çулне йăлтах пÿлсе лартма пултараççĕ.

АНГЛИ ВОЙСКИСЕМ ТĔРЕКЛЕТНĔ МАРЕТ ЛИНИНЕ ЙЫШĂНСА ИЛНĔ

ЛОНДОН, мартăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, саккăрмĕш арми мартăн 26-мĕшĕнче тăшман позицийĕсене атакăлама пуçласа халь тăшмана тĕреклетнĕ Марет районĕнчен каялла чакмалла тунă. Çав çапăçусенче авиаци вăйлăн пулăшса пынипе союзниксен войскисем çынсем, танксем, орудисем тата мототранспорт тĕлĕшĕпе тăшмана пысăк çухатусем кÿнĕ.

Марет линин тĕреклетнĕ тĕп позицийĕсем союзниксен армин аллинче тăраççĕ. Ĕнер союзниксем Марет, Тужан тата Матвата урамĕсене йышăнса илнĕ. Юлашки 8 кун хушшинче тыткăна 6.000 çын ытла илнĕ.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ БЕРЛИНА ТАПĂННИ ÇИНЧЕН ТĔПЛĔНРЕХ ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, мартăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 28-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Берлин çине вĕçсе пырса тапăнни 30 минута пынă. Хула çине 1.800 тата 3.600 килограмм туртакан бомбăсем нумай пăрахнă. Шпрее шывĕн икĕ енче те нумай çĕрте вăйлă пушарсем тухнă.

Берлина тапăннă пек вăйлăн Лондона вăрçă пуçланнăранпа та тапăнман. Лондон çине чи нумай бомбăсем пăрахни 1941 çулхи апрелĕн 17-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пулнă. Хула çине ун чухне 450 бомбăран кая мар пăрахнă. Мартăн 28-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Берлин çине бомбăсем çавăнтан икĕ хут ытла пăрахнă.

ФРАНЦИ РАБОЧИЙĔСЕМ ВĂЙПА ГЕРМАНИЕ ЯРАССИНЕ ХИРĔÇЛЕÇÇĔ

ЛОНДОН, мартăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Лондона французсен пĕтĕмĕшле ĕç конференцийĕн секретарĕ Альбер Гиги пынă, вăл Францири профсоюзсем вăрттăн ĕçлесе тăни çинчен пичет представителĕсене каласа панă. Апла пулин те профсоюз организацийĕсем Францире пур çĕрте те пур, вĕсем 2 миллион çурă рабочисемпе служащисене пĕрлештерсе тăраççĕ.

Франци рабочийĕсене ирĕксĕррĕн Германие янине пула массăллă забастовкăсем тухса кайнă. Ун пек забастовкăсем 1942 çулхи октябрь уйăхĕнче Францин промышленноçлă тĕрлĕ центрĕсенче пуçланнăччĕ. Çав забастовкăсене пула хăшпĕр хуласенче Германие рабочисем ярасси 2—3 уйăха тăсăлнă. Лавальăн сутăнчăкла политикине Франци рабочийĕсем организациленсе хирĕç тăрасси малалла та пулса пырать.

Пĕлтерÿ

Апрелĕн 2-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) Горкомĕн Парткабинетĕнче (Чувашская ур., 6) Сталин юлташăн 1943 çулхи февралĕн 23-мĕшĕнчи приказне вĕренмелли 2-мĕш темăпа — «Совет Союзĕ гитлерла Германие хирĕç вăрçакан отечественнăй аслă вăрçăн татăклă тапхăрĕ» темăпа хулари пропагандистсен семинарĕ пулать.

Семинара ВКП(б) Горкомĕн лекторĕ Давтян юлташ ирттерет.

ВКП(б) Горкомĕн Парткабинечĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

П Ĕ Л Т Е Р Ÿ

СССР Государство банкĕн Чăваш республикинчи Контори халăха çакăн çинчен пĕлтерет: Госбанкăн отделенийĕсем пур граждансенчен те ятлă укçа вклачĕсем йышăнаççĕ.

Вкладсене Государство Банкĕн отделенийĕсем йышăнаççĕ, вкладăн сумми 3.000 тенкĕрен кая пулмалла мар. Вклад хывнă хыççăн хывакан укçасене вара кирек мĕн чухлĕ пулсан та йышăнаççĕ.

Вкладчиксем хăйсен вклачĕсене хăйсен ирĕкĕпе тыткалаççĕ. Вкладчик хăйĕн вклачĕ тăрăх укçа пĕтĕмпех е пĕр пайне ыйтсанах, ăна вклад кĕнекине кăтартсан укçа параççĕ.

Государство Банкĕ вкладсем çинчен никама та пĕлтермест. Вкладсем çинчен никама та пĕлтермелле мар йĕркене пăснăшăн Государство Банкĕн работникĕсене Уголовнăй йĕркепе ответ тыттараççĕ.

Вкладсене никам та тĕкĕнме пултараймасть. Суд органĕсем тата Уголовнăй ĕçсене йĕркелекен следстви органĕсем постановлени йышăнмасăр вкладсене арестлеме е вĕсенчен укçа шыраса илме юрамасть.

Вкладсене çакăн пеккисене йышăнаççĕ:

а) ыйтсан памалли вклад; ун тăрăх укçа (пĕтĕмпех е пĕр пайне) кирек хăш вăхăтра та параççĕ;

б) срокла вклад; ăна 6 уйăхран кая мар срока йышăнаççĕ;

в) условиллĕ вклад; ăна укçа хывакан çын кăтартса панă условисем килсе çитсен çеç тыткалама юрать;

г) тĕллевлĕ вклад; ăна вкладчик хăй кăтартнă тĕллев валли хывать.

Вкладчик дохода процент халлĕн илет: ыйтсан памалли вклад тăрăх тата условиллĕ, тĕллевлĕ вкладсем тăрăх çулталăкне 3%, срокла вклад тăрăх 5% тÿлеççĕ.

Вклад тăрăх кĕрекен доходран тата наследство йĕркипе куçакан вкладран налогсем илмеççĕ.

Вкладчик хăйĕн вкладне хăйĕн законлă наследникĕсене çеç мар, кирек кама та, кирек мĕнле организацие те халалама пултарать.

Вкладчик хăйĕн вкладĕнчи укçана Государство Банкĕ урлă хăйĕн ячĕпе е ытти çын, учреждени е организаци ячĕпе Госбанкăн кирек хăш отделенине те куçарма пултарать.

3—2

СССР Госбанкĕн Чăваш республикинчи Контори.

Шупашкарти энергетика техникумĕ (ĕлĕк Строительный техникум пулнăскер) I-мĕшпе II-мĕш курссене вĕренме çĕнĕрен пухасси çинчен пĕлтерет

Техникум хуласенчи электростанцисемпе электросеть валли техник-электриксем тата механиксем хатĕрлет. Техникумра 3 çул та 4 уйăх вĕренмелле. 15 çултан пуçласа 30 çула çитнĕ арçынсемпе хĕрарăмсене илеççĕ, производствăран уйăрса вĕрентеççĕ.

1-мĕш курса çак специальноçсем тăрăх илеççĕ: 1) техник-электриксем тата 2) дизельнăй установкăсене эксплоатацилекен механиксем. II-мĕш курса—дизельнăй установкăсене эксплоатацилекен механик специальноçĕпе илеççĕ.

Заявленисене апрелĕн 10-мĕшне çитиччен йышăнаççĕ. Заявленисемпе пĕрле çакăн пек документсем тăратмалла: а) автобиографи, б) туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухни çинчен калакан свидетельство, в) виçĕ фотокарточка (çарапуçăн ÿкерни пулмалла), г) хăçан çуралнине ĕнентерекен свидетельство, д) сывлăха пĕлтерекен справка, е) хăйпе пĕрле паспорт пулмалла.

1-мĕш курса 1940—41-мĕш тата 1941—1942-мĕш вĕренÿ çулĕсенче туллимар вăтам шкултан „отлично" тата „хорошо" паллăсемпе вĕренсе тухнисене тата çичĕ çул вĕреннĕ отечественнăй вăрçă инвалидĕсене испытанисĕрех илеççĕ. Ыттисене вырăс чĕлхипе, математикăпа, физикăпа тата СССР Конституцийĕпе испытанисем тыттараççĕ. II-мĕш курса вăтам шкулăн 8—9-мĕш класĕсенчен „отлично" тата „хорошо" паллăсемпе вĕренсе тухнисене испытанисĕрех илеççĕ. Вĕсен вара 1-мĕш курсра вĕреннĕ специальнăй дисциплинăсем тăрăх 1-мĕш семестр хушшинче испытани тытмалла пулать.

Туллимар вăтам шкултан отлично вĕренсе тухнисене тата отечественнăй вăрçă инвалидĕсене стипенди параççĕ. Техникума йышăннисем валли столовăй тата общежити пулать. Вĕреннишĕн икĕ срокра çулталăкне 150 тенкĕ тÿлемелле. Пенсионерсен ачисене, пенсионерсене, военнослужащисен ачисене, çавăн пекех тата отечественнăй вăрçă инвалидĕсене вĕреннĕшĕн тÿлеттермеççĕ. Испытанисем апрелĕн 11-мĕшĕнче пуçланаççĕ. Заявлени панисен уйрăм çырса пĕлтерессине кĕтмесĕрех çав вăхăт тĕлне килмелле. Занятисем апрелĕн 15-мĕшĕнче пуçланаççĕ. Заявленисене çак адреспа ямалла: Шупашкар, Калинин урамĕ, 3-мĕш номерлĕ шкул çурчĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 1006 Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. б. 58. 42 п.